# ШКУЛ САССИ

*16–мӗш кăларăм*
*2023 çулхи авăн уйăхӗ*



**ШКУЛ пурнăçӗ**

***********************************


**Ăста тăлмачăсем……………………………………2 стр.**
**Куславккара – хăнара …………………………..3-4 стр.**


**Шкул хаçачӗ 2022-мӗш çулхи нарăс уйăхӗнчен тухса тăрать**


***Хаçата йӗркелесе яраканӗсем:***
***Ермошкина Раиса Николаевна***
***Сютова Кристина Васильевна***

# ШКУЛ САССИ

**Чăваш чĕлхи урокĕнче 6-мĕш класра вĕренекенсем**
**В. Эткелĕн «Çулçăсем» ятлă сăввине вырăсла куçарса пăхрĕç.**
**Пулса пĕтнĕ-ши? Вуласа пăхма сĕнетпĕр:**

| | |
|---|---|
| Кам сăрланă-ши, анне,<br>Вĕрене çулçисене?<br>Пулнă тăнă симĕсрен<br>Хĕрлĕ, сарă та кĕрен.<br>- Сăрлаканĕ – кĕркунне, -<br>Хуравларĕ ман анне.<br>В. Эткел | - Кто раскрасил листья клена<br>В красный, желтый и бордовый?<br>Мама мило улыбнулась:<br>- Это ОСЕНЬ постаралась.<br>6-мĕш класс ачисем |

# ШКУЛ САССИ



## Куславккара – хăнара

*«Тăван çут çанталăка юратма вĕренмесĕр тăван çĕр-шыва юратма май çук», - тенĕ вырăссен паллă çыравçи Л.Н. Толстой.*

*«Чăваш Енĕн ĕлккен вырăнĕсене çитсе курмасăр тăван тавралăх илемĕпе киленме вĕренеймĕн», - çак шухăша тĕпе хурса эпир, Санарпуç вăтам шкулĕн 11-мĕш класĕнче вĕренекенсем, класс руководителĕпе тата вĕрентекенсемпе пĕрле инçе çула тухса кайрăмăр.*

*Куславкка тăрăхĕнчи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккисене тунă тыл ĕçченĕсене халалланă мемориала çитсе куртăмăр. Палăк аякранах мăнаçлăн курăнса ларать. Вăрнар районĕнчен кайнă хӳтĕлевçĕсен ячĕпе уçнă плита умĕнче асăнмалăх сăн ӳкерчĕк турăмăр. Эпир ентешсемпе мăнаçлантăмăр.*

*Музея кĕрсен экспонатсем умĕнче чарăнмасăр иртме çук. Пыра юр чăмакки евĕр япала ларать. Экспонатсем чĕрĕ çынсем пекех, вĕсем пире иртнĕ ĕмĕрĕн синкерлĕ вăхăчĕсем патне тавăраççĕ. Акă пăчки-пуртти, пĕрени, лаши, кĕреçи… Кунтах – хӳтĕлевçисем… Çук, çук, вĕсем ывăнман, вĕсем инçете шанчăкпа тинкереççĕ, пĕтĕм чун хавалне пухса Çĕнтерĕве çывхартаççĕ.*

# ШКУЛ САССИ




*Акă Ф. Кузьмин, А.Пояндаев, С. Чикмякова кăларнă «Вăрнарсем – ĕç фрончĕн паттăрĕсем» ятпа пичетленсе тухнă кĕнеке. Акă паллакан хушамат. Ара, ман хушаматлă çын та пур-çке кунта -Аляхова Акулина…*

*«Манăн атте енчен тивекен тăван-ши ку? – çак ыйту пуçа шĕкĕ çинĕ пек пăралать. «Атте-аннерен киле çитсенех ыйтса пĕлмелле-ха», - тесе тĕв турăм.*

*Истори предметне вĕрентекен Федорова Марина Анатольевнăпа пĕрле сăнаса-тĕпчесе çўрерĕмĕр, Патшалăхăн пĕрлехи экзаменне хатĕрленме курăмлăх хатĕрĕсем турăмăр, сăн ўкерĕнтĕмĕр.*

*Кайран эпир «Птичий полет» («Кайăк-кĕшĕк вĕçевĕ») текен илемлĕ вырăнта пулса куртăмăр. Мăнаçлă Атăл шавланине ç-ў-ў-ллĕ вырăнтан итлерĕмĕр. Чăтаймарăмăр, икĕ алла ирĕклĕ кайăксем вĕçнĕ пек, Атăл патнелле ыткăнтăмăр, ашкăнчăк çилпе хăваламалла вылярăмăр, çыран хĕррипче çулçă пуçтартăмăр – телейлĕ ачалăхпа савăнтăмăр. Чуччу ярăнтăмăр, чĕре хавассăн, ирĕккĕн тапрĕ.*

*Киле çитсен аттепе аннене тĕпчерĕм Аляхова Акулина манăн атте енчен тивекен мăн асанне пулчĕ тăчĕ.*

*Ача чухне атте нумай каласа панă мăн асанне пирки, анчах та асра юлман пулмалла. Ку çул çўрев манăн куçа уçрĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă хăрушлăхне те, совет халăхĕн чăтăмлăхĕпе паттăрлăхне те çамрăк чунпа туйса- ăнланса илме пулăшрĕ.*

*Çул çўреме питĕ килĕшрĕ. Кам Куславкка тăрăхĕнче пулса курман, çывăх вăхăтрах – юр лариччен – кайса килме тăрăшăр. Тăван çĕрĕм-шывăмăр çут çанталăкĕпе, илемĕпе киленĕр. Телейлĕ çул пултăр!*

*Кристина Аляхова, 11-мĕш класра вĕренекен*